Редакци почтинчен

«Çăкăрё паян кӳрсе килни е ёнерхи?»

Çапла вырăсла ыйтрё пёр чипер тумланнă çамрăк хёрарăм Муркаш салинчи апат-çимёç лавккинче. Лавккара ватă çынсем те пурччё çав вăхăтра. Пёр ватă кинемей çав ыйтăва илтсен сăнран улшăнчё: пёр хёрелчё, пёр шуралчё, тарăннăн сывласа та илчё. Тем каласшăн пулчё çав çамрăк хёрарăма, анчах лешё нимён те илмесёрех çӳллё кёлёллё пушмакёпе шаклаттарса лавккаран васкасах тухса утрё. Манăн кăмăл та çакна курнă хыççăн пусăрăнчё. Эх усрасчё сана пёр виçё кун пирён асаннесемпе асаттесен яшлăхён вăхăтёнче. Еплерех «юрланă» пулăттăн эсё ун чухне çăкăр пирки? Çапла калама эпё те ёлкёреймерём çав ун чух. Черетпе килёшӳллён хама кирлине туянтăм та лавккаран тухрăм...

Паянхи пурнăç ёлёкхи мар. Лавкка сентрисем çинче мён кăна çук пуль! Мён килёшет, çавна илсе çи, çавна илсе тăхăн. Саплăклă çи-пуçпа та халё никам та çӳремест. Çитес çёре те ёлёкхи пек çуран е лашапа çӳреместпёр. Çăкăрне те ав хăшё-пёри «ёнерхине» çиесшён мар.

Эпё хам ватă çын пулмасан та çăкăр хакне пёлмен çынсене ăнланмастăп: камсем вёсем, кам çуратса ӳстернё вёсене? Акă майăн 9-мёшёнче, Аслă Çёнтерёве чыслана кун, Муркаш салинчи митингра тыл ёçченёсене сăмах пачёç. Вăрçă çулёсенче епле пурăнни, ёçлени, мён çини пирки каласа пачё ватă хёрарăм. Уйрăмах вёсем юман йёкелне авăртса пур-çук çăнăхпа хутăштарса пёçерсе çини çинчен каласа пани ман асăма кёрсе юлчё. Çавăн чух хамăн асанне каласа панисем те пуçра тепёр хут «вăранчёç», чуна çӳçентерчёç. Çуркунне хире тухса çёрёк çёр улмин крахмалне пуçтарса кёртнине, унтан икерчё пёçерсе çинине хурланса каласа паратчё мана вăл эпё пёчёккё чухне. «Хăçан çемçе çăкăра (паллах, лайăх çăнăхран пёçернине) алла тытса ăш каниччен, хырăм сарăличчен çисе курас-ши тесе ёмётленеттёмёр эпир», – тетчё. Мана та хăй пурăннă вăхăтра мён ачаран çăкăра хаклама вёрентрё. Çăкăр каснă хыççăн кашни тёпренчёкне вăл сётел çинчен алăпа пуçтаратчё. Яшкана та ярса çиетчё. Эпё 15 çула кайсан çёре кёчё вăл.

Асатте те фронтра шăн сухари епле кăтăртаттарнине каласа паратчё. Икёвиçё кун шăл хушшине нимён те хуманнине те пёрре темёнле уяв хыççăн «наркомовский» çёр грамне ёçсен чунне уçмалла каласа панăччё. Ун чух эпё «наркомовский» сăмах пёлтерёшне те ăнланман...

Çапла. Вăхăтра темён те курнă, тӳснё пирёнтен аслăрах ăрури çынсем. Эпир, вёсен ачисемпе мăнукёсем, вёсене хăйсене те, вёсем пирёншён тăрăшса пурнăçланă ёçсене те хаклама пёлместпёр. Хăшё-пёри çăкăра та ёнерхипе паянхи çине уйăрать.

Маншăн çăкăр – яланах Çăкăр. Сире те çăкăра çав çӳлерех çырса кăтартнă хёрарăм пек ан хаклăр тесе каласшăн.

Ан манăр, сётел çинче çăкăр пулсан пурнăçра ытти те пулать. Çăкăр сётел çине тар тăкмасăр çитменнине самантлăха та манас марччё. Апат-çимёç лавккине кёрсен çавăн пек ыйту пама тăхтасчё.

Игорь Майков.

Кашмаш ялё.

Ялти учитель

36 çул – Турай шкулёнче

Эльвира Николаевна Иванова Турайри вăтам шкулта вырăс чёлхипе литературине вёрентет. 36 çул ёçлет ёнтё вăл çакăнта, Чăваш патшалăх университетне пётерсен алла дипломпа направлени илнёренпе. Миçе ачана вёрентсе пурнăç çулё çине тухма пулăшман пулё вăл? Миçе ачана экзаменсемпе олимпиадăсене, тёрлё конкурссене хутшăнма хатёрлемен пулё? Шутласа та пётереймён.

Шкулти пурнăça активлă хутшăннисёр пуçне килте те вăл ёçчен те ăшă кăмăллă. Ивановсен çемйи Çулав ялёнче пурăнать. 2 ывăлпа хёр ӳстерсе пурнăç çулё çине каларнă ёнтё вёсем. Мăшăрё те хăй вăхăтёнче шкулта ёçленёрен Эльвира Николаевнăна ялах ăнланса пулăшса пырать.

Çак кунсенче вара Эльвира Николаевна вёрентнё ачасем пёрлехи патшалăх экзаменёсене тытса хăйсен пёлӳ шайне тёрёслерёç. Уроксенче те, экзамена хатёрленнё вăхăтра та вёренекенсем хăйсен учителён кашни сёнӳ-канашне ăса хывма тăрăшаççё. Пуян опытлă вёрентекене хисеплеççё.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сăмах – сывлăх хуралçине

Арçынсен чирё

Çулсеренех Пётём тёнчери гемофилия федерацине кёрекен çёр-шывсен хисепё ӳссе пырать. Гемофили кунне тёнчипе паллă тăвакан кун та пур. Ăна çак сиплеме май çук ăруран ăрăва куçакан чир çине ытларах тимлёх уйăрассишён паллă тума йышăннă та. Тёнчипе гемофилийăпа 400 пин çын – 10 пин арçынтан пёри – чирлет.

Гемофилия – ашшё-амăшёнчен куçакан чир. Çак чирпе чирлисем пурнăç тăршшёпех юн кёвёлес йёрке пăсăлнипе аптăраççё. Чир тёслёхёсен 80 проценчё юн шёвекёнче ятарлă глобулин çитменнипе çыхăннă. Çапла вара чирлисен юн кёвёлес вăхăт тăсăлать, пёчёк суран пулсан та юн вăйлă юхать. Юн кирлё пек кёвёлменни арçынсен кăна палăрать. Йывăрлăхёпе вара вăл тёрлё çемьесенче ăруран ăрăва тёрлёрен куçса пырать.

Камсен пулать-ха çак чир? Социаллă шая тата этемсен расине пăхмасăрах, вăл ялан тенё пекех арçынсен кăна пулать. Чире куçаракансем – хёрарăмсем, хăйсем вара вёсем çак чирпе аптăрамаççё. Юн кёвёлменни йывăр формăллă чухне пулмалла мар çёртех юнăхнă (кăвакарнă) вырăнсем пулаççё е суранран юн ытла та вăрах вăхăт хушши юхать.

Арçын ачасен çак чир паллисем вёсем упаленме е утма пуçличчен палăрмаççё. Вёсем чирлё пулнине юнăхнă вырăнсем пулнипе е чёлхепе тутаран юн юхнипе пёлме пулать. 2-3 çулхи арçын ачасен сурансенчен юн юхнине пула мышцăсемпе сыпăсем те сиенленме пуллараççё. Çакна пула шыççарах тăракан вырăнсем ыратаççё тата алă-ура хусканăвёсем вăйсăрланаççё.

Шел пулин те, паян çак чире пётёмпех сиплеме майсем çук. Анчах та юн чылай юхассине чарма пулăшакан препаратсем паян çителёклё. Çапла вара пёр-пёр операци тунă е шăл каларнă хыççăн, мышцăсемпе сыпăсене е ытти тёртёмсене (тканьсене) юн кайнă хыççăн вёсемпе тухтăрпа канашласа сипленмелле.

В. ГРИГОРЬЕВА,
Муркашри тёп больницăн участокри терапевчё.

Пирён пата çыраççё

Вулакансен йышё чакмасть

Тойкилтё ялёнчи тёслёх библиотекăна халăх йышлă çӳрет: шкул ачисенчен пуçласа пенсионерсем таранах. Интереслё кёнекесене алла тытсан пăрахас та килмест çав. «Малалла мён пулатьши, сăнарсен шăпи еплерех çаврăнса тухать-ши, çакна пёлес килет-çке», – теççё вулакансем.

Ялти библиотекăра вулакансем ыйтакан кёнекесем çук пулсан, Муркашри тёп библиотекăран илсе килетпёр. Вулаççё, интересленеççё çёнё кёнекесемпе М. Никитина, М. Илларионова, Н. Федорова тата ыттисем те. Нумай вулакансен ретне Тойкилтё ялёнчи Г. Васильевăна, А. Ивановăна, З. Виссарионовăна, Г. Охоринăна, З. Воронинăна тата ытти вулавçăсене те кёртмелле.

Н. Димитриев, Ю. Иванов фермăра каçхи хуралçăсем пулса тăрăшаççё. Вёсем те кёнеке вуламасăр пурăнма пултараймастпăр теççё. Шаптак ялёнче пурăнакан Е.И. Иванова 85 çула çитсе пырать пулсан та кёнекепе туслă пурăнать, чăвашла нумай вулать. Ăна библиотекăна çӳреме йывăртарах, çавăнпа та ача садёнче ёçлекен Р. Ефимова та, библиотека ертӳçипе шкул ачисем те ăна кёнекесемпе тивёçтерсех тăраççё.

Н. Павловăпа А. Иванова та библиотекăра час-часах пулаççё. Шаптакран утмалăх пур-ха, çапах та ӳркенмеççё вёсем, хаçат-журнал, кёнеке вуласа кăмăлёсене уçаççё.

М. НИКОЛАЕВА,
Тойкилтёри библиотека ертӳçи.

Спорт

Акатуйёнче волейболла выляма

Июнён 5-мёшёнче районти Акатуй уявё ячёпе Лантăш вăрманён уçланкинче волейболла выляссипе ăмăрту иртет. Вăл 11 сехетре пуçланать.

Малтанхи кунне вара, июнён 4-мёшёнче, вăйлăрах командăсене суйласа илес тёллевпе волейболла выляссипе вăйăсем иртеççё.- Унта пур ёç коллективён командисене те йыхравлаççё. Вёсем те Лантăш вăрманёнчи уçланкăрах иртеççё. 10 сехетре пуçланаççё.

Хамăр инф.

Тав тăватпăр

Хорнуй ялёнче пурăннă юратнă ывăла, пиччене – «Васильев» индивидуаллă предприятире ёçленё Сергей Анатольевич Павлова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйхăна пирёнпе пайланăшăн тăвансене, юлташсене, шкулта пёрле вёреннисене, ял-йыша, районти тёрлё предприятисемпе организацисенче вăй хуракансене чун-чёререн тав тăватпăр.

Павловсен çемйи.

Пёлтерӳсем. Объявления

Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 24-38.

Хурапа шурă тёслё тынашки сутатпăр, январь уйăхёнче пёрремёш хут пăрулать. Тел.: 89278492473.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА KBE
ГЕРМАНСКОЕ КАЧЕСТВО
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
Б.Т. Лидер
Сроки изготовления от 3 до 5 дней
Беспроцентный кредит
Скидка до 20% / Гарантия 5 лет
от 3490 руб.
Телефон:
г. КАНАШ, ул. Полевая, д. 20. Тел.: 4-16-19;
ул. Пушкина, д. 31. Тел.: 2-25-08;
ул. Железнодорожная, д. 161. Тел.: 2-19-89.

Агрофирма «Крол» продает кроликов породы: белый великан, серебристый великан. Тел.: 8-905-199-41-90, 8-927-992-89-52. 2-5.

Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 2-8.

Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой. Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 2-8.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории

- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:110101:147, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв. м;

- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:110101:148, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв. м;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участница долевой собственности Самушкина Нонна Димитриевна, 20. 08.1922 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Вомбакасы, ул. Матикасинская, д. 15, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Большесундырского сельского поселения.

2. Самушкиной Нонне Димитриевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Вомбакасы, ул. Матикасинская, д. 15.

Участники долевой собственности Котлов Виталий Порфирьевич, 01.02.1947 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Шомиково, д. 45, в 1/12 доле , Маркиянова Зинаида Порфирьевна, 05.11.1948 года рождения, проживающая по адресу: Республика Коми, г. Печора, Печорский пр., д. 20, кв. 112, в 1/12 доле, Семенова Алевтина Порфирьевна, 09.08.1950 года рождения, проживающая по адресу: г. Чебоксары, б-р Эгерский, д. 16, кор. 1, кв. 50, в 1/12 доле , сообщают о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Кадикасинское, на территории землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:072501 площадью 2,84 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.

2. Котлову Виталию Порфирьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Шомиково, д. 45.

Инициативная группа собственников земельных долей на территории СХПК «Волга» сообщает, что общее собрание участников долевой собственности по вопросу выдела земельных долей в натуре состоится 5 июля в 10.00 часов в здании Вурманкасинского сельского клуба с повесткой дня:

1. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой в первоочередном порядке выделяются земельные участки в счет земельных долей СХПК «Волга».

2. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой находятся невостребованные земельные доли СХПК «Волга».

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
работаем с пайщиками
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
КПКГ “КАПИТАЛ”
выгодные % ставки
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.

Коллективы прокуратуры Моргаушского района и Моргаушского районного суда выражают искреннее соболезнование начальнику отдела охраны общественного порядка МВД по Чувашской Республике полковнику милиции Макарову Евгению Дмитриевичу в связи с безвременной кончиной

МАТЕРИ

Коллектив ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» выражает искреннее соболезнование начальнику цеха птицеводства Макарову Олегу Дмитриевичу в связи с тяжелой утратой – кончиной матери

Любови Николаевны

Мăн Хураçкари пётёмёшле пёлӳ паракан тёп шкул коллективё кунта нумай çул хушши газооператорта ёçленё

ЯРЫКОВ
Иван Иванович

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванёсемпе пёрле таранăн хурланни çинчен пёлтерет.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.

Чувашское книжное издательство предлагает с доставкой словари, православную, детскую, художественную, краеведческую, научно-популярную, учебную литературу. С ассортиментом продукции можно ознакомиться в редакции райгазеты. Сайт: www.chuvbook.ru.

Муркаш районёнчи «Çёнтерӳ ялавё» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерствин «Муркаш районён «Çёнтерӳ ялавё» хаçат редакцийё» автономи учрежденийё.

Тёп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тёп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайё - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайё - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2009 çулхи раштавăн 7-мёшёнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленё.

Калăпăшё 1 пичет листи.

Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççё.

Рекламăпа пёлтерӳсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйё Николаева Н.Н.
Пичете панă 01.06.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерӳ ялавё», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.